**Кӗр кунӗнче карла-карла кӑнтӑралла…**

Кӗр кунӗнче карла-карла кӑнтӑралла
Картин-картин вӗҫеҫҫӗ кайӑксем:
«Кайри мала, хур кайӑксем, кайри мала!» —
Чупаттӑмӑр эпир, шӑпӑрлансем.

«Кайри мала» тенин пӗлтерӗшне-тӗшне
Ун чух, паллах, ним чухлӗ ӑнланман.
Анчах туйнах-тӑр ҫав сӑмах асамлӑхне,
Вӑл куҫнӑ ҫавӑнпа ламран лама.

«Кайри мала!» — хыҫа юлать ав ӳре хур,
Ҫамрӑкраххи тухать ун вырӑнне.
Ҫапла чакать, чакать умри мӗнпур хӗн-хур —
Тӑсаҫҫӗ кайӑксем хӑйсен ҫулне.

Этемлӗх те ҫавах, пырать ҫав ҫул-йӗрпех
Темле чӑрмав пулсан та умӗнче,
Ӑна вӑл пурпӗрех ҫӗнет-ҫӗнтеретех —
Кайри мала туртать паян кунччен.

Мӗнех, каллех килет кӗр кунӗ — каймалла.
Иртеҫҫӗ ҫаплипех кунсем, ҫулсем.

— Кайри мала, хур кайӑксем, кайри мала! —

Чупаççӗ кӑшкӑрса шӑпӑрлансем.

*Смолин, А. «Кӗр кунӗнче карла-карла кӑнтӑралла...» : [сӑвӑ] / А. Смолин // Тӑван Атӑл. – 2010. – № 9. – С. 80.*